Опытпа паллашма – Америкăна

# Курмалли-пĕлмелли сахал пулман



***«Уçă тĕнче» («Открытый мир») программăна 1999 çулта йĕркеленĕ. Ăна Америка Конгресĕ финансласа тăрать. Ку программăпа килĕшӳллĕн иртекен анлă мероприятисене пысăк пуçлăхсемпе пĕрлех судьясемпе тухтăрсем те, вĕрентекенсем те, журналистсем те, т. ыт. те хутшăнаççĕ. Вăл шутра библиотека ĕçченĕсем те. Америкăри Хелбергри Халăх библиотекин директорĕ Брайн Маккормик Чăваш Енри ĕçтешĕсен çитĕнӳĕсемпе паллашма килсе кайнăранпа вăхăт нумаях та иртменччĕ, çав тĕллевпех пирĕн республика делегацийĕ те Америкăра пулса курнă. Рессей делегацийĕнче 54 çын пулнă пулсан, ĕç опычĕпе паллашма пирĕн республикăран 5-ĕн хутшăннă. Вĕсенчен 2-шĕ пирĕн районтан. Çав шутра Атапайри вĕрентӳпе культура центрĕн тĕслĕх библиотекин библиотекарĕ Лия Валерьяновна МАКСИМОВА та. Америкăри ĕçтешĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашса таврăннă май вăл хаваспах хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерме килĕшрĕ.***

– Асăннă программăн тĕллевĕ – Раççейре тĕрлĕ облаçре вăй хуракансене кĕске вăхăтлăх визитпа Америкăра пулса ĕçтешĕсен ĕç опычĕпе паллашма майсем туса парасси, Америкăпа Раççей хушшинчи ăнланулăхпа килĕштерсе ĕçлессине малалла аталантарса парасси, умри пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене пĕрлехи вăйпа татса памалли майсене палăртасси. Çакă икĕ еншĕн те усăллă тесе шутлатăп. Кун пек килĕштерсе ĕçлени професси ăсталăхне аталантарма, пĕрлехи çĕнĕ проектсем ĕçе кĕртме май парать.

Америкăра сентябрĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 5-мĕшĕччен пултăмăр. Çула вара сентябрĕн 21-мĕшĕнчех тухрăмăр. 3 кун хушши Мускавра хатĕрленӳ ĕçĕсем пулчĕç. Визăсем хатĕрлерĕмĕр, конференци пулса иртрĕ.

Америкăра пире Брайн Маккормик хăй кĕтсе илчĕ, пирĕн делегацие те хăех ертсе çӳрерĕ.

Вунă кун хушши Америкăра пулнă май хамăрăн коллегăсен ĕçĕ-хĕлĕпе, опытпа паллашма, иртterекен мероприятисене хутшăнма майсем çителĕклĕ пулчĕç. Программа тĕрлĕ енлĕ те пуян пулчĕ. Ачасен, общественноçăн пурнăçĕ, интересĕсем пирки пĕлни те мĕне тăрать. Администраци, культурăпа кану учрежденийĕсен представителĕсемпе, общество лидерĕсемпе тĕл пултăмăр.

Вашингтонра икĕ кун хушши пултăмăр. Кунти Конгресс библиотекинче пулни нумайлăха асра юлĕ. Библиотекăра мар, хăвна музейре пулнă пекех туятăн. Кунсăр пуçне шкулсенчи, университетсенчи библиотекăсен ĕçĕпе те паллашрăмăр, писательсемпе те тĕл пултăмăр.

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршыв аслă пĕлӳ парассипе тĕнчери малта пыракан патшалăхсен шутĕнче. Çĕнĕлĕхсем юлашки вăхăтра сахал мар пулса иртрĕç пулин те, ĕлĕкхи мелсемпе ĕçлессинчен хăпса пĕтейместпĕр-ха. Америкăра вара шкул çулне çитиччченех ачана пĕлӳ тĕнчине «астарма» тĕрлĕ майсемпе усă кураççĕ. Сăмахран, Вашингтонри Ачапăча библиотеки курăмлă дизайнĕпе, ăш пиллĕхпе кăна мар, кĕнекисемпе те тĕлĕнтерет. Библиотекăсенче пуканесем, теттесем кашни утăмрах темелле. Вĕсем ачасене илĕртеççех ĕнтĕ.

Кĕнеке çӳлĕкĕсем пирĕн патри пек çӳллĕ мар. Кирлĕ кĕнекене шырама питĕ меллĕ. Кунсăр пуçне библиотекăсенче çĕнĕ технологисемпе анлă усă кураççĕ. Çӳлĕк çинче кĕнеке çукки сахал-тăр. Унти халăх Интернетпа туслă. Библиотекарьсем тĕнчен кирек хăш кĕтесĕнчи ĕçтешĕсемпе çăмăллăнах çыхăнма пултараççĕ. Вулакан онлайн меслечĕпе хăйне интереслентерекен информацие илме пултарать. Библиотекăсене çынсем йышлă çӳреççĕ пулин те, черет таврашĕ çук. Вулав билетĕнчи штрих-код кирлĕ пур информацие те хăйĕнче упрать. Вуласа ывăнсан çемçе софа çинче канса илме те, массажлă хăмпăсем ăшне кĕрсе выртма та пулать.

Библиотекăсене çемьепе пĕрле çӳресси йăлана кĕнĕ. Висконсин штатĕнчи пĕр хулари библиотекăра пултăмăр. Çемье мероприятийĕ пыратчĕ. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен пĕчĕк ачисемпе пынă унта. Утма хăйсене иртерех пулин те, юрăсем шăрантараççĕ, ют чĕлхесем вĕренеççĕ.

Кунта ачасем 5 çул тултарсан шкула çӳреме тытăнаççĕ. Унччен вара библиотекăсене çӳресе ташлама-юрлама та, ыттине те хăнăхаççĕ. Пĕрлехи шкул форми çук.

Библиотекарь ĕçĕ унта питĕ ответлă та пĕлтерĕшлĕ шутланать. Библиотекăра ĕçлес тесен 8 çул вĕренес пулать. Малтан педагогика, кайран ятарлă библиотека пĕлĕвĕ илмелле. Çавăнпах пулĕ библиотекăсенче ĕçлекенсенчен ытларахăшĕ аслăрах çулхисем. Библиотекăсене тытса тăрассине патшалăх хăй çине илет.

Пирĕн патри пек «тĕслĕх библиотека» ăнлав Америкăра çук. Вулав çурчĕ вĕсемшĕн – информаципе, çĕнĕ технологисемпе, инноваци тĕлĕшпе пур енлĕн тивĕçтерекен заведени. Кунĕн-çĕрĕн ĕçлекен библиотекăсем те çук мар.

Библиотекăсенче кĕнекесем сутассине те йĕркеленĕ. Туянакансем те сахал мар. Хакĕсем те туянакансемшĕн юрăхлă. Вăхăт-вăхăт кĕнекесем сутассипе ярмăрккăсем пекех пысăк мероприятисем иртtereççĕ. Халăх йӳнĕ хакпа нумай кĕнеке туянать. Кам чăнах кирлипе, теприсем килти библиотекăна пуянлатма.

Хамăрăн библиотека пирки калас пулсан, юлашки вăхăтра ырă еннелле улшăнусем чылай пулса иртрĕç. Интернет, çĕнĕ технологисем… Апла пулин те Америкăри ĕçтешсенчен вĕренмелли, пурнăça кĕртмелли те сахал мар тесе шутлатăп.

Пурăнасса эпир, Юнкă библиотекин библиотекарĕпе Надежда Александровапа иксĕмĕр Брайанпа Марина Маккормик çемйинче пурăнтăмăр. Марина Шупашкарта çуралса ӳснĕ. 2 çул каялла Америка çыннине качча тухнă, унтах пурăнать. Туйне те вĕсем Шупашкарта ирттернĕ. Брайанпа Марина Раççее, Шупашкара килсе çӳреççĕ. Çитес çул та вĕсем Маринăн çуралнă вырăнĕсенче пулса курасшăн.

Çавна та каласа хăварас килет. Гостиницăра мар, Америка çыннисен çемйинче пурăнни пирĕншĕн питĕ усăллă пулчĕ. Çапла майпа пирĕн вĕсен пурнăç условийĕсемпе, йăли-йĕркисемпе паллашма, хутшăнма та майсем ытларах пулчĕç.

Америкăра ытларах кукуруза çитĕнтереççĕ. Унран хатĕрленĕ продуктсем чылай. Малтанах эпир вĕсене килĕштерсех каймасттăмăр. Кайран хăнăхрăмăр. Сĕт, тăпăрч тути те пирĕннинчен расна. Çапах та хамăрăннисемех тутлăрах пек туйăнаççĕ.

Чĕнмесĕр хăнана тухса çӳресси йăлара çук. Икĕ сĕтел вырнаçтарса лартаççĕ. Пĕрин çинче хатĕрленĕ продуктсем, апатçимĕç. Тепри вара – апатланмалли. Хăвăн мĕн çиес килнине кайса илетĕн те сĕтел хушшине ларса апатланатăн. Уяв таврашне шăвшавлă ирттермеççĕ. Ытларах иккĕмĕш блюдăсем хатĕрлеççĕ. Продуктсене тăварлăрах та йӳçекрех хатĕрленĕ пек туйăнчĕ. Ял хуçалăх продукцийĕн пасарĕсенче вара кавăна хапăлласах туянаççĕ. Ăна питĕ килĕштереççĕ пулас.

Чăвашсене йăваш та тарават тетпĕр те, Америкăра пурăнакансем те чăвашсенчен ку енĕпе кайра мар. Пире Маринăпа Брайан хăйсен çемйинче 10 кун хушши усрарĕç, çитерчĕç-ĕçтерчĕç. Эпир пĕлнĕ тăрăх, вĕсене уншăн никам та укçа-тенкĕ тĕлĕшпе саплаштармасть. Пĕтĕмпех хăйсен ирĕкĕ-кăмăлĕпе.

Пирĕн патра парнесене хăнана пырсан параççĕ. Вĕсем патĕнче вара урăхларах. Парнесене уйрăлас умĕн пама хăнăхнă. Маккормиксемпе уйрăлас умĕнхи каçхине пĕрле пухăнтăмăр. Вĕсене эпир Муркаш районĕн энциклопедине, Чăваш Республики çинчен 2 диск, буклетсем парнелесе хăвартăмăр. Хамăр та парнесемсĕр юлмарăмăр. Чăваш юррисемлĕ дисксем уйрăмах килĕшрĕç. Çĕрĕпех чăваш ташшисене вĕрентрĕмĕр, ташларăмăр, чăваш юррисене юрларăмăр. Пурне те питĕ хаваслă пулчĕ.

10 кун питĕ хăвăрт иртсе кайрĕ. Тăван çĕр-шыва таврăнма вăхăт çитсен вара кил хуçин мăшăрĕ Марина куççульне пытараймарĕ. Çавна каласа хăварасшăн. Хамăрăн Америкăри коллегăсемпе, пире йышăннă çемьесемпе, программа сотрудникĕсемпе йĕркеленнĕ туслă çыхăнусене эпир çухатмăпăр, малашне те аталантарса пырăпăр.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**çырса илнĕ.**



Маринăпа Брайан Маккормик хăнасене хавас.

Ырă ĕçсен çулталăкĕнче

## Пархатарлă ĕçпе палăрчĕç

Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат-çурчĕ вăрман уçланкинче илемлĕ те хăтлă вырăнта вырнаçнă. Хамăр районти кăна мар, тĕрлĕ районсенчи ватă çынсем хӳтлĕх тупнă кунта.

Чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕнче кунта Куç курманнисен кунне паллă турăмăр. Çак кун Каршлăхри интернат-çуртри ватăсем çинчен те манса каймарăмăр. Ветерансене, ватă çынсене Валентина Анатольевна Крючкова культорг чăваш тумне тăхăнса, вĕсемпе пĕрле ларса чăваш юррисене юрласа савăнтарчĕ. Кунти ватăсем хăйсем çамрăк чухне вăйăсене тухса мĕнле юрăсем юрланине аса илчĕç. Вĕсем пурте Валентина Анатольевнана тав сăмахĕ каларĕç.



Интернатпа юнашарах Александр Невский мăнастирĕ вырнаçнă. Унта пурăнакансем кӳршĕсемпе питĕ килĕштереççĕ. Мăнастирь настоятелĕ Виталий атте Куç курманнисен кунĕ ячĕпе интернат валли çур тонна купăста, çĕр улми, хĕрлĕ кăшман парса савăнтарчĕ.

Çавăн пек ырă ĕçсем тăваççĕ ырă ĕçсен çулталăкĕнче. Никамăн та çакăн пек ырă ĕçсем тăвассинчен аякра тăрса юлас марччĕ. Çынна ырă туни хăвăн патна та ырăпах таврăнать.

**Г. МЕРЛОВА,**
**интернат-çурт ертӳçи.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Куç курманнисен кунĕнче.**

Шкул хыпарĕсем

## Кĕнекесемпе туслă пулсан

«Чĕр чунсем çинчен çĕнĕ кĕнекесем пур-и?»– ыйтать яланах библиотекăна кĕрсен Москакассинчи вăтам шкулта 3-мĕш класра вĕренекен Таня Миронова. Кĕнекесене вулать çеç мар, чĕр чунсене ӳкерме, вĕсем çинчен сăвăсем çырма та юратать çак ырă чунлă хĕр ача.

Тĕлĕнмелле хĕр ача çак Таня. Унпа калаçма та кăмăллă. Вăл нумай пĕлме тăрăшни те куçкĕрет. Çавăнтах тата чăваш хĕр ачин сăпайлăхĕ унра.

Кĕнеке нумай вулани ачана вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыма пулăшать. Таньăн та çаплах. Унăн дневникĕнче «5» паллăсем кăна.

Хĕр ача библиотекăран тухсан Муркашри искусство шкулневаскать. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ ташă тĕнчипе паллашать. Библиотекăра иртекен мероприятисене те Таня активлă хутшăнать: е уява ертсе пырать, е пĕр-пĕр юмах персонажĕ пулса хăнана килет, е викторина-конкурс участникĕ. Кашни ĕçе тĕплĕ тума пĕлни, кĕнеке нумай вулани Таньăна час-часах конкурссенче çĕнтерме пулăшать.

Кĕнекепе туслă пулни пурнăçра пулăшса пытăр сана, Таня.

**Р. СИБЯКОВА,**
**Москакасси ялĕн библиотекин библиотекарĕ.**

